**МИНИСТЕРСТВО ПРОСВЕЩЕНИЯ РОССИЙСКОЙ ФЕДЕРАЦИИ**

**Министерство образования Чувашской Республики**

**Вурнарский муниципальный округ**

**МБОУ "Вурман-Кибекская СОШ"**

**УТВЕРЖДЕНО**

**И.о.директора школы**

ДАНИЛОВА ТАТЬЯНА ИЛЬИНИЧНА

Подписано цифровой подписью: ДАНИЛОВА ТАТЬЯНА ИЛЬИНИЧНА
Дата: 2023.11.03 10:57:24 +03'00'

**Данилова Т.И.**

**Приказ №69-О от «31» августа 2023 г.**

# Рабочая программа курса

внеурочной деятельности

**«Хунав»**

5-9 классы

д. Вурман-Кибеки 2023г.

## Ăнлантару çырăвĕ

Класс тулашĕнчи ĕçсем вĕренӳ йĕркипе тачă çыхăнса тăраççĕ.Учитель урок хыççăнхи кружокра вĕренӳ вăхăтĕнче пуçланă ĕçе малалла аталантарать.Тăван литература чĕлхи-чи çӳлти пусăмра тăракан чĕлхе.Тăван чĕлхене лайăх пĕлмесĕр çирĕп пĕлӳ илме çук.Çакна уйрăмах çамрăк ăрăвăн асра тытмалла. Тăван чĕлхе пуянлăхне вĕренекенсем анлăрах пĕлччĕр тесен кружок йĕркелемелле. Ачасем кружокра тĕрлĕ енлĕ пĕлӳ илеççĕ: чăваш халăх поэчĕсемпе писательсен кун-çулĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе паллашаççĕ, литературăн тĕрлĕ жанрне алла илеççĕ, тавра курăмне ӳстереççĕ.

Ĕç программине «Вăрман-Кипекри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулăн» вĕренӳ планĕпе килĕшӳллĕн хатĕрленĕ. Пĕтĕмпе 34 сехет, эрнере-1 сехет.Кружока (5-9) класра вĕренекенсем çӳреççĕ.

**Тĕллевĕсем:**

Вĕренекенсене корреспондент (журналист) профессийĕпе паллаштарасси.
Вĕренекенсене ача-пăча журналĕсемпе, хаçачĕсемпе кăсăклантарасси. («Çĕнтерӳ çулĕ», «Тантăш», « Хыпар» т.ыт.те)
Ачасене анлă пĕлӳллĕ, пысăк тавракурăмлă пулма пулăшасси.

**Вĕрентӳ задачисем**:

- Кружок членĕсене шкулта иртекен мероприятисем çинчен информацисем пуçтарма, вĕсене район хаçатĕнче е шкулти стена хаçатĕнче çутатса пама вĕрентесси.
- Интервью илме вĕрентесси.
-Проект ĕçне тума вĕрентесси.

**Пуплев ăсталăхне аталантармалли задачăсем**:

-Вĕренекнсен калаçу тата çыру чĕлхине пуянлатасси. Заметка, калав, сăвă, очерк çырма вĕрентесси.
-Хаçат-журнал чĕлхипе ĕçлеме хăнăхтарасси.

**Сапăрлăх (воспитани) задачи**:

Ачасене тӳрĕ чунлă, ырă кăмăллă, çепĕç чĕлхеллĕ, ватта-вĕтте хисеплеме, чĕр чунсене, çут çанталăка юратма, упрама вĕрентесси.

**Вĕрентӳ формисем**: калаçу, практика ĕçĕ, экскурси, интервью, проект ĕçне туни.

**Курсăн пĕтĕмĕшле характеристики**

Кружокра ачсем хаçат жанрĕсемпе паллашаççĕ, хăйсем çырнă заметкăсемпе корреспонденцисене сӳтсе яваççĕ, çырас ăсталăха ӳстереççĕ.Кружок членĕсем пĕр-пĕринчен конкретлă ыйтупа интервью илеççĕ. Калаçăва телефон çине çырса илеççĕ. Çакă вара ачасем тăвакан йăнăшсене хăйсенех тупма май парать.Ачасем ял хуçалăх культурисен, ӳсен тăрансен ытти çавăн пек сăмахсене чăвашларан вырăсла куçарма, словарьпе усă курма вĕренеççĕ.Çакăн пек ĕçлени ачасен патриотла туйăмне аталантарать, професси суйласа илме вĕренеççĕ,этикăпа мораль тĕлĕшĕчен те аталанса пыраççĕ.

**Харкамлăх (личностные) результачĕсем**

- текст тĕсĕпе стильне уйăрма;

-план тума, çав планпа калаçу тата çыру чĕлхинче тĕрĕс усă курма;
-орфографи, пунктуации, грамматика, пуплев йăнăшĕсене асăрхама;
-чĕлхен илемлĕх мелĕсемпе тĕрĕс усă курма;
-тĕрлĕ литературăпа ĕçлеме;
-хаçат-журнал жанрĕсене уйăрма
-интервью илме тата пама.

**Пур предмета та (метапредметные) вĕренме кирлĕ результатсем**

-сăмаха каласа е çырса пĕлтернĕ инфомацие тĕрĕс ăнланни;
-тĕрлĕ çĕртен (хаçат-журналтан, Интернетран, радиопа телевидинирен т.ыт.те)килекен материал çине таянса информаци пухма пултарни;
-ку е вăл темăпа çыхăннă материала вуласа е илтсе тупма, ăна пухса, тишкерсе, кирлине суйласа илме пултарни; пухнă информацие сыхлама, улăштарма тата кирлĕ çĕре çитерме пултарни;
- тантăшсем умĕнче пĕчĕк е пысăкрах доклад тума хăху пурри;
- внўре илнĕ пĕлўпе, нумай-нумай хăнăхупа яланхи пурнăçра усă курни; тăван чĕлхене вĕренсе пухнă пĕлўпе тата хăнăхупа ытти предметсене (тăван мар чĕлхене, литературăна т.ыт.те) вĕренме усă курни.

**Содержани:**

**Кўртĕм**. Кружок старостине, редколлеги членĕсене суйлани.Ĕç планĕпе паллаштарни.Ача-пăча хаçачĕсен, журналĕсен хăйне евĕрлĕхĕпе паллаштарни.(«Тантăш» хаçат, «Çĕтерў çулĕ», «Тете» журналсем). 2 сехет.
**Чăваш периодика пичечĕ патша саманинче тата халь**. «Хыпар» хаçтпа, Н.В.Никльскипе паллаштарасси. 2 сехет.
**«Çĕтерў çулĕ» журналисчĕсемпе тĕл пуласси**. 1 сехет
**Информаци жанрĕсем**. 10 сехет.
**-Заметка** 2сехет.- кĕскен çырса пыни, кĕске хыпар.Практика ĕçĕ.Панă тема тăрăх заметка çырасси. ( экскурсие кайса килни, шкул пахчинче т. ыт. те).
**Репортаж** 2сехет- пулса иртнĕ ĕçсем çинчен хаçатра е радиопа журналист хăй мĕн курнине çырса е каласа кăтартни.Практика ĕçĕ шкулти (районти) спорт ăмăртăвĕ çинчен репортаж хатĕрлемелле. Панă тема тăрăх проблемăллă репортаж хатĕрлемелле.
**-Интервью** 2сехет-публицистика жанрĕ; çыравçă пĕр е темиçе çынпа халăха канăç паман пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйту тавра калаçни; çав калаçу тăрăх çырса хатĕрленĕ хайлав.Интервью тĕсĕсем: интервью-монолог, интервью- пĕлтерў, интервью-диалог, интервью- тĕрленчĕк, интервью-шухăш, анкета, ыйтса пĕлни.Практика ĕçĕ. Интервью илме план тумалла.
**-Хроника** 1сехет- пурнăçра пулса иртекен паллă ĕç-пуç çинчен хаçатра е журналта çырса кăларни, радиопа е телевиденипе пĕлтерни.
**-Обзор** . «Тантăш» хаçата пăхса тухни.
**-Рецензи**.3сехет Хаçат-журналта пĕр-пĕр литература хайлавне тишкерсе çырни, критика жанрĕн тĕсĕ. Рецензии хайлавăн тĕп ыйтăвĕсене п тухаççĕ, пахалăхĕпе пĕлтерĕшне, автор пултарулăхне т.ыт. енĕсене хак параççĕ.
Практика ĕçĕ:
-Пĕр-пĕр кино, спектакль çинчен пĕчĕк рецензии çырасси.
-пĕр-пĕр кĕнекене хакласа çырасси.
-хăйсен çырнă сăввине хак памалла.
**«Хунав» хаçатăн номерĕсене хатĕрлесе кăларасси. 4 сехет**
**Хаçат пичетленипе паллашасси**. Типографие экскурсие каясси. 1сехет
**Кружок членĕсем çырнă материалсене сўтсе явасси.Материалсене ят парасси. Панă темăсем тăрăх** сăвă, калав çырасси. 14 сехет.

-Çуллахи каникул кунĕсенче çырнă материалсемпе паллашасси, тишкересси 1сехет.
-Сăвă виçине аса илни. Практика ĕçĕсем ирттерни. 3 сехет.
-«Кĕрхи сăнсем» тема тăрăх калав е сăвă çырасси, суйласа район хаçатне яни.
-«Юр пĕрчипе çăлтăрсем», «Асамлă хĕл» тема тăрăх юмах, сăвă, калав çырасси, суйласа район хаçатне яни. 1 сехет.
-«Тăван тавралăх-тăван кĕтес» альбом валли материалсем пуçтарни. 3 сехет.
-«Тăван тавралăх» темăпа сăвă, калав конкурсне ирттересси. 1 сехет.
-«Çурхи сăнавсем» темăпа ĕçлесси: практика ĕçĕ(сăнавсем ирттересси, сăнарлă сăмахсемпе ĕçлесси). 3 сехет.
-Ачасене çуллахи каникул вăхăтĕнче тумалли ĕçсемпе паллаштарасси.1 сехет

.

**Тематика планĕ**

| № | Тема | Ачасен ĕç-хĕлĕ | Сехет |
|---|---|---|---|
| | | | |
| 1 | Ĕç планĕпе, ача-пăча хаçчĕсен хăйне евĕрлĕхĕпе, «Тантăш» ,«Çĕнтерӳ çулĕ» хаçатпа паллаштарни. | Кружок старостине, редколлеги членĕсене сйлаççĕ. «Тантăш» хаçатпа, журнал хăйне евĕрлĕхĕпе паллашаççĕ. | 1 |
| 2 | Çуллахи каникул кунĕсенче çырнă хайлавсемпе паллашасси,тишкересси. | Хăйсем çырнă калавĕсемпе,сăввисемпе паллаштараççĕ, тишкереççĕ | 1 |
| 3 | Чăваш периодика пичечĕ патша саманинче тата халь. «Хыпар» хаçатпа, Н.В.Никольскипе паллашни. | Патша саманинчи пичетпе, Н.В.Никольскипе, «Хыпар» хаçатпа паллашаççĕ. | 1 |
| 4 | «Çĕнтерӳ çулĕ» журналистчĕсемпе тĕл пуласси. | Журналистсемпе тĕл пулаççĕ, ыйтусем параççĕ. | 1 |
| 5 | Информаци жанрĕсем: | Информаци жанрĕсемпе ĕçлеççĕ | 1 |
| 6 | Заметка, практика ĕçĕ | Панă тема тăрăх заметка çыраççĕ | 1 |
| 7 | Репортаж, практика ĕçĕ. | Спорт ăмăртăвĕ çинчен,проблемăллă репортаж хатĕрлеççĕ. | 1 |
| 8 | Хроника, обзор | Хроника çырма вĕренеççĕ, «Тантăш» хаçата обзор тăваççĕ. | 1 |
| 9 | Рецензи, практика ĕçĕ. | Пĕр-пĕр кĕнекене, кино хаклаççĕ. | 1 |
| 10 | Сăвă виçине аса илни, практика ĕçĕсем ирттерни. | Икĕ сыпăклă, виçĕ сыпăклă сăвă виçине, рифмăсене аса илеççĕ. | 1 |
| 11 | «Кĕрхи сăнсем» тема тăрăх калав есăвă çырасси. | Чи лайăххисене «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçата ярса пареççĕ. | 1 |
| 12 | «Тăван тавралăх- тăван кĕтес» альбом валли материалсем пуçтарни. | Чи лайăх хайлавсене суйласа илеççĕ, альбом тума пуçлаççĕ. | 1 |
| 13 | «Тăван тавралăх» темăпа сăвă, калав конкурсне ирттересси. | Конкурсра хăйсен сăввисене, калавĕсене вулаççĕ. | 2 |
| 14 | Ачасене çуллахи каникул вăхăтĕнче тумалли ĕçсемпе паллаштарасси. | Çуллахи каникул вăхăтĕче те ачсем сăвă, калав çыраççĕ | 2 |
| 15 | Ял ячĕсен пулăвĕ.Авлхи ял ячĕсем. | Хайсен ял ячĕсен пулăвĕ синчен çыраççĕ. | 2 |
| 16 | Шыв-шур ячĕсем. Сырма-сатра ячесем. | Хайсен ял ячĕнчи шыв-шур ячесем синчен çыраççĕ. | 2 |

| | | | |
|---|---|---|---|
| 17 | Вăрман, уй-хир, улăхсемпе варсен ячĕсем | Хаш-пĕр есесем синчен çыраççĕ. | 2 |
| 18 | «Çурхи сăнсем» темăпа ĕçлесси.Практика ĕçĕ (сăнавсем ирттересси, сăнарлă сăмахсемпе ĕçлесси | Чĕлхен илемлĕх мелĕсемпе ĕçлеççĕ | 2 |
| 19 | Интервью, практика ĕçĕ | Интервью илме план тăваççĕ | 2 |
| 20 | Кроссворд | Кроссворд хатерлеме веренесси | 2 |
| 21 | Хасат пичетленипе паллашасси.Типографие экскурсие каясси. | Хаçат пичетленипе паллашаççĕ | 1 |
| 22 | Кружок членĕсем çырнă материалсене сӳтсе явасси.Материалсене ят парасси. Панă тема тăрăх сăвă, калав çырасси. | Çырнă материалсене сӳтсе явассе. | 2 |
| 23 | «Хунав» хаçатăн номерĕсене хатĕрлесе кăларасси | Хаçт валли материалсем пухаççĕ, чи лайăххисене суйласа илеççĕ. | 3 |
| | Пурĕ | | 34 |

**Литература:**

МетинП.Н. Литературăпа халăх сăмахлăхĕн ăнлавĕсем: шкул словарĕ. Шупашкар,1997.
Метин П.Н. Илемлĕ литература текстне тишкересси. Шупашкар, 2009.
Антонова З.С, Станьял В.П. Чăваш сăмахлăхĕн вĕрентӳ меслечĕсем. Шупашкар.2006.
Пуçламăш шкулта урок хыççăнхи ĕç- хĕле йĕркелесси. Методика сĕнĕвĕсем, сехетсене пайланин тата уйрăм ĕçсен тĕслĕхĕсем. Шупашкар 2010.
Чăваш чĕлхипе литератури. Теории тата методика. Статьясен пуххи. Шупашкар 2011.
Горшков А.Е. Сăмах пултăр уçăмлă, шухăш пултăр витĕмлĕ. Шупашкар 1981.
Тимаков В.П. Сăмах илемне туйсан (Сăвă çырма вĕренекенсене пулăшма) Шупашкар 1980.
Л.П.Сергеев  Сăмах тĕнчи. Шупашкар 2011
А.Е.Горшков Сăмах пултăр уçăмлă, шухăш пултăр витĕмлĕ. Шупашкар 1981
Чăваш чĕлхипе литератури. Статьясен пуххи.Шупашкар 2011